Хĕл ăсатăвĕн уявĕнчен

# Хавас кăмăл-туйăмпа, ташă-юрăпа

## *кĕтсе илчĕç район çыннисем Çуркуннене*



Пурин валли те пур уяв кучченеçĕ.

Хальхи вăхăтра производствăн пур сферинче те хĕрарăмсем сахал мар ĕçлеççĕ. Вĕрентӳ, сывлăха сыхлас ĕç, культура сферисенче вара вĕсем 80–90 процент тарах. Вĕсем хушшинче ертӳçĕ тилхепине арçынсенчен пĕртте кая мар тытса пыракансем те йышлă. Акă район сучĕн председателĕ Э.Л. Тарасова, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ, хĕрарăмсен районти канашĕн председателĕ А.Е. Андреева тата ыттисем чи ăшă сăмахсене тивĕç. Вĕсене тата районти мĕн пур хĕрарăмсене район пуçлăхĕ чи малтанах Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе саламласа ĕçре, пурнăçра ăнăçусем, ырлăх-сывлăх, телей сунчĕ.

Уявсем уявсемпе те, умри ĕçсем, задачăсем пирки те манма юрамасть. Çурхи уйхир ĕçĕсем çитсе килеççĕ, хатĕрленӳ ĕçĕсене кая хăварни хакла ларма пултарать.

Çитменнине кăçал Республика кунне пирĕн районта ирттерме палăртнă. Хăнасем умĕнче пит хĕретмелле ан пултăр тесен тар кăларса ĕçлемелли çук мар.

Пухăннисене Хĕл ăсатăвĕн уявĕ, Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе Э.Л. Тарасова, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх предприятийĕн ертӳçи В.И. Семенов, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем ячĕпе «Ударник» ял хуçалăх предприятийĕн ертӳçи П.П. Давыдов, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин та саламларĕç.

Чăннипех те çак Хĕл ăсатăвĕн уявĕсенче мартăн 8-мĕшĕнче Муркашра тата тепĕр кунне Мăн Сĕнтĕрте ял çыннисем тулли кăмăлтан савăнма пултарчĕç. Уйрăмах художество пултарулăх ушкăнĕсен ăсталăх шайĕ ӳссе пынине палăртмалла. Вĕсем хăйсен хавас юрри-ташшипе пухăннисене савăнтарчĕç кăна мар, ташă-юрă картине йыхравларĕç. Муркаш енче те, Мăн Сĕнтĕр енче те ташă-юрă ăстисем сахал мар иккен. Ахальтен мар ĕнтĕ хальхи вăхăтра районта халăх ятне тивĕçнĕ коллективсем 11 шутланаççĕ.



«Ай юрлар-и юррине, ай ташлар-и ташшине?»

Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен, уйрăм предпринимательсен «çуркунне тумне тумланнă» суту-илӳ предприятийĕсем Хĕл ăсатăвне пухăннисене хăйсен продукцине сĕнчĕç. Техĕмлĕ шашлыкне те, Çăварни икерчине те тутанса пăхма май пулчĕ.

Уявсен программи ачасем валли ирттерекен тĕрлĕ вăйăсемпе пуян пулчĕ. Çапла пулмалла та. Уявра та вĕсем йышлăн вĕт-ха. Кашниех ку е вăл вăйăра хăйĕн пултарулăхне кăтартма тăрăшать. Ăнăçуллисем вара парнесене тивĕçрĕç.

Тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсем те çав кун массăллă та интереслĕ иртрĕç. Муркашри Спорт çуртĕнче мини-футбол енĕпе предприятисемпе организацисен командисем хушшинче, Мăн Сĕнтĕрте пĕр-пĕрне тулли михĕсемпе лектерсе çĕнтересси енĕпе ăмăртусем епле иртнине чылайăшĕ куç сиктермесĕр тенĕ пекех сăнарĕ.

Епле Хĕл ăсатăвĕн уявĕ-ха вăл тата капăрлатнă çуна кӳлнĕ лашасемсĕр, вĕсемпе çил хăваласа катаччи чупмасăр? Ку енĕпе вара Мăн Сĕнтĕрсем пултаруллăрах пулнине палăртмалла. Мăн Сĕнтĕрте çуна кӳлнĕ лашасем 11 пулчĕç пулсан, Муркашра 5 çеç. Вăл шутран 4-шĕ «Свобода» тата тепри «Оринино» хуçалăхсенчен. Апла пулин те уявсем уяв пекех иртрĕç, кӳлнĕ лашасем сахалрах пулни уяв сĕмне тĕксĕмлетеймерĕ.

Уявсенче вара маттуррисене, пултаруллисене чысламасăр-саламламасăр еплеха? Çуна кӳлнĕ лашасен ăмăртăвĕнче Муркашра «Свобода» хуçалăх 1-мĕш, «Оринино» хуçалăх 2-мĕш вырăнсене пайларĕç. Мăн Сĕнтĕрте вара ку енĕпе Лаптевсене, Ильинка ял тăрăхĕнчи Шишокинсене тата «Передовик» хуçалăха çитекенни пулмарĕ.

Художество пултарулăх коллективĕсем хушшинче Муркашра Сыпайри «Акуча» тата Калайкассинчи юрăпа ташă ансамблĕсем 1-мĕш вырăнсене, Шетмĕпуçĕнчи коллективпа Муркашри «Муркаш» халăх фольклор ансамблĕ 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене пайларĕç. Мăн Сĕнтĕрте чи пултаруллисем Мăн Сĕнтĕрти «Янаш» юрăпа ташă халăх ансамблĕпе Ярапайкассинчи «Екрем» халăх фольклор ансамблĕ, Москакассинчи «Шуçăм» юрăпа ташă халăх ансамблĕ тата Тренккăри юрăпа ташă ансамблĕ пулчĕç.

Мини-футболла выляса районта мала тухассишĕн 8 команда вăй виçрĕ. Малти вырăнсене Муркаш ял тăрăхĕнчи «Моргауши-1», Ильич яч. хис. тата «Оринино» хуçалăхсен командисем çĕнсе илчĕç.

Конкурссенче, ăмăртусенче, вăйăсенче мала тухнă коллективсем, командăсем, уйрăм участниксем нихăшĕ те уявсенче парнесĕр юлмарĕ.

Асра юлмалла, хаваслă иртрĕç уявсем. Астăвасса, Муркаш енсем вара кирлĕ чухне канма та, кирлĕ чухне тар кăларса ĕçлеме те пултаракансем пулнине пĕрре кăна мар кăтартса панăччĕ. Çитес çурхи ĕçсен итогĕсем çавна çирĕплетсе парасса шанас килет.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Муркаш райповĕн магазинĕсен сентрисем пуян.




Юратнă хĕрарăмсем, сире валли çак чĕрĕ чечексем!




Муркашри Спорт çурчĕ уяв кунĕнче те пушă пулмарĕ.



Çăварни икерчине тутанса пăхма кăмăл пур-и?

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Ял хуçалăхне илес пулсан, кунта татса памалли ыйтусем тупăнсах тăраççĕ-ха. Апла пулин те ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракансем, умри йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса çĕнĕ чикĕсем çĕнсе илекенсем те çук мар. «Ударник» хуçалăхра 2007 çулта усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне 2 миллион та 600 пин тенкĕлĕх продукци туса илме пултарнă. «Свобода», Ильич яч. хис., «Герой», «Восток» пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен те ӳсĕмĕсем курăмлă.

Ырă ĕçсен çулталăкĕ

# Ял çыннисемшĕн тăрăшать

Хорнуй ялĕнчи Сергей Николаевич Королькова ку тăрăхра ытларахăшĕ аван пĕлет. Уйрăм предприниматель ĕçне кӳлĕннĕскер, ял тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн кирлĕ ĕçсем сахал мар тăвать. Акă вăл тăрăшнипе суту-илӳ çурчĕ уçăлчĕ. Унта вара ял çыннисене валли куллен кирлĕ апат-çимĕç продукчĕсем сахал мар. Питех те меллĕ вĕсемшĕн çакă.

Пирĕн Хорнуй ял тăрăхĕнче вăл хутшăнмасăр, унăн спонсорла пулăшăвĕсĕр пĕр мероприяти те иртмест темелле. Пысăк тав сăмахне тивĕç вăл уншăн.

Çавна та каласа хăварас килет. Вĕсен урамĕнче йĕркеллĕ çул çук пирки йĕпе-сапа вăхăтĕнче питĕ пылчăклăччĕ. Кунта та йĕрке тума май тупрĕ Сергей Николаевич. Юлташĕсемпе вак чул, кирпĕч ванчăкĕсем турттарса килсе çул çине сарса тухрĕ. Асфальт çул мар ĕнтĕ, паллах. Çапах та чĕркуççи таран пылчăкра ишместĕн халĕ.

Ырă ĕçсен çулталăкĕнче кăна мар, яланах ыттисемшĕн май пур таран тăрăшасси пурнăç норми пулса тăтăрччĕ. Хамăр умри йывăрлăхсене те ун чухне пĕрлехи вăйпа татса пама майсем ытларах пулĕç.

**З. КУПЦОВА,**
**Хорнуй ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн председателĕ.**

Эсир ыйтнипе

# Право сыхлавĕн ĕçченĕ пулас тесен

***Право сыхлавĕн органĕсенче ĕçлеме вĕренме каяс текенсем хальхи вăхăтра çук мар. Çар ретĕнче пулнă хыççăн хăшĕсем хăйсен пурнăçне çак пархатарлă та чыслă ĕçпе çыхăнтарасшăн. Çавăнпа та ăçта вĕренме кайма май пур пирки районти шалти ĕçсен пайĕн ертӳçин пулăшаканне, кадрсем енĕпе ĕçлекен специалистне Л. КРОЛЬКОВАНА каласа пама ыйтрăмăр.***

Мускавра, Волгоградра, Чул Хулара, Санкт-Петербургра, Саратовра милици работникĕсене «Юриспруденци», «Правăна сыхлас ĕç-хĕл», «Бухгалтер учечĕпе аудит», «Суд экспертизи», «Финанссемпе кредит» специальноçсемпе хатĕрлеççĕ.

Куçăмлă майпа вĕренмешкĕн экзаменсене август уйăхĕнче пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкул програмипе тытмалла:

1. «Юриспруденци» специальноçпа (аслă юридици пĕлĕвĕ, 5 çул вĕренмелле), «Правăна сыхлас ĕç-хĕл» (аслă юридици пĕлĕвĕ, 4 çул та 6 уйăх), «Суд экспертизи» (аслă юридици пĕлĕвĕ, 5 çул) специальноçсемпе: физхатĕрленӳ, обществознани, Раççей историйĕ, вырăс чĕлхипе литератури (çырса).

2. «Финанспа кредит», «Бухгалтер учечĕпе тишкерӳ тата аудит», (аслă юридици пĕлĕвĕ, 5 çул) специальноçсемпе: физхатĕрленӳ, математика, обществознани, вырăс чĕлхи тата литератури (çырса).

3. «Правăна сыхлас ĕç-хĕл» специальноçпа (вăтам юридици пĕлĕвĕ, 2 çул та 4 уйăх): физхатĕрленӳ, Раççей историйĕ, вырăс чĕлхипе литератури (çырса).

Раççей Шалти ĕçсен министерствин Новочеркасскри Суворов çар училищинче вĕренме 14 çулчченхи, çакăн чухне пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулăн 8 класне ăнăçлă вĕренсе пĕтернĕ, сывлăх тĕлĕшĕнчен училищĕре вĕренме юрăхлă, экзаменсене ăнăçлă тытнă, малашне шалти ĕçсен органĕсенче службăра тăма кăмăл тăвакан яшсене йышăнаççĕ.

Çавăн пекех РФ Шалти ĕçсен министерствин Санкт-Петербургри çар институтĕнче 1 курса вĕренме кĕме йыхравлаççĕ. Ку институтра ятарлă çар пĕлĕвĕ илнисене офицерсем пулма хатĕрлеççĕ. Вĕренӳ вăхăчĕ – 5 çул.

РФ Шалти ĕçсен министерствин Пермьри çар институчĕ пулас офицерсене йыхравлать. Кунта автобронетанк техники, артиллери вооруженийĕ, интендант тата кинолог факультечĕсем пур.

Вĕрентӳ училищисене каймашкăн мĕн пур кирлĕ документсене районсенчи тата хуласенчи шалти ĕçсен пайĕсенче çырса хатĕрлеççĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕнчен тĕплĕнрех 2-19-60 телефонпа ыйтса пĕлмелле.